27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 13 ЫТЛАРИКУН 28(6779) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 4-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Арми генералне ПЕТРОВА Фронт штабӗн начальникне Генерал-лейтенанта КОРЖЕНЕВИЧА

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, Карпат тӑрӑхӗнчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнӑн йывӑр условийӗсенче малалла наступлени туса пырса, паян, февралӗн 12-мӗшӗнче, БЕЛЬСКО хулине—ҫулйӗрсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен Моравская Острава патӗнчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ.

БЕЛЬСКО хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ВОРОБЬЕВ генерал-лейтенантӑн, БАТЮНЯ генерал-лейтенантӑн, БОНДАРЕВ генерал-лейтенантӑн, Ш[illegible]ТО генерал-майорӑн, БУШЕВ генерал-майорӑн, ЗАПОРОЖЧЕНКО генерал-майорӑн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорӑн, ГУСЕВ генерал-майорӑн, ВЛАСОВ полковникӑн, ВАСИЛЕВСКИЙ генерал-майорӑн, МАТУСЕВИЧ полковникӑн, БУШТРУК полковникӑн, ТОМИЛОВСКИЙ полковникӑн, ИВАНОВСКИЙ генерал-майорӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ПАРХОМЕНКО генерал-майорӑн, ХОМИЧ полковникӑн, БЕЖКО генерал-майорӑн, ТЕТЕНКО полковникӑн, ДУДАРЕВ генерал-майорӑн, ЧЕРНЫЙ полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн КАРИОФИЛЛИН, СМИРНОВ полковникӑн, ДАВЫДОВ полковникӑн, ЗАПОРОЖЧУК полковникӑн, СЕРГЕЕВ полковникӑн, артиллери генерал-майорӗн БАЛАШОВАН, ШЕВЧЕНКО полковникӑн, ЦИВЧИНСКИЙ полковникӑн, РАЕВ подполковникӑн, НИКИТИН полковникӑн, ЗАИКИН подполковникӑн, УСАТЕНКО полковникӑн, ПЛАХУНОВ подполковникӑн, МУРЗОВ майорӑн, ПАРНОВСКИЙ полковникӑн, КАШКИН подполковникӑн, ДИБРОВ подполковникӑн, БРИЛЕВ подполковникӑн, БЫСТРЕЛОВ подполковникӑн, БРОЗГОЛЬ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ШИРОБОКОВАН, АЛЕКСАНДРОВ полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн РАЙКИНАН, ХОПКО полковникӑн, АРТАНКИН подполковникӑн, ВИТКОВСКИЙ майорӑн, ГАЕВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ подполковникӑн, ЖИРНОВ майорӑн, МОРУС полковникӑн, ОЛЬХОВЕНКО подполковникӑн, ШУРЫГИН майорӑн, ФРОЛОВ майорӑн танкисчӗсем: авиаци генерал-лейтенанчӗн ЖДАНОВАН, авиаци генерал-майорӗн ИЗОТОВАН, авиаци генерал-майорӗн КОТЕЛЬНИКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ГОЛОВНЯН, СЕМЕНОВ полковникӑн, ОБУХОВ полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн ЛАКЕЕВАН, авиаци генерал-майорӗн УХОВАН, ЧУК полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн КОЛЕСНИКОВАН, ВОЛОДИН полковникӑн, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ГОВОРОВАН, ХАЛИЗЕВ полковникӑн, АСТАПОВ полковникӑн, САВЕЛЬЕВ полковникӑн, НАУМОВ полковникӑн саперӗсем; сыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн МАТВЕЕВАН, ТАРУНИН полковникӑн, БЕЛЯНЧИК полковникӑн, АРСЕНЬЕВ полковникӑн, Государство Хӑрушсӑрлӑх майорӗн КОРОТКОВАН связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БЕЛЬСКО хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 12-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БЕЛЬСКО хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БЕЛЬСКО хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи февралӗн 12-мӗшӗ. № 275.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсен командующине Совет Союзӗн Маршалне КОНЕВА Фронт штабӗн начальникне Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, ОДЕР шывӗнчен хӗвеланӑҫнерехре наступлени вӑйлатса пырса, паян, февралӗн 12-мӗшӗнче, нимӗҫ Силезийӗнче БУНЦЛАУ хулине—ҫулйӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен БОБЕР шывӗ ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—ҫапӑҫса туртса илнӗ.

БУНЦЛАУ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: КОРОТЕЕВ генерал-полковникӑн, АКИМОВ генерал-лейтенантӑн, КОЛОМИНОВ генерал-майорӑн, САЗОНОВ генерал-майорӑн, СМИРНОВ генерал-майорӑн, ХИЛЬЧЕВСКИЙ полковникӑн ҫарӗсем; РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ИВАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МИТРОФАНОВАН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн БАХМЕТЬЕВАН, ДРАГУНСКИЙ полковникӑн, ЧУГУНКОВ полковникӑн, ЮРЧЕНКО полковникӑн, ГОЛОВАЧЕВ полковникӑн, ПОПОВ полковникӑн, СУХОВАРОВ полковникӑн, КУРИСТ полковникӑн, АРХИПОВ полковникӑн, БОГДАНОВ полковникӑн танкисчӗсем; артиллери генерал-майорӗн НИКУЛИНАН, НОВИЦКИЙ полковникӑн, ЩЕГОЛИХИН полковникӑн, МАЛЮТИН подполковникӑн, СЛИТИНСКИЙ подполковникӑн, ЩАВЛИНСКИЙ майорӑн, СТОЛЯРОВ майорӑн, КИРЬЯНОВ майорӑн, БЫКОВ майорӑн артиллерисчӗсем: КАМЕНЧУК полковникӑн саперӗсем: БОРИСОВ полковникӑн, РУДЕНКО подполковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, БУНЦЛАУ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 12-мӗшӗнче, 23 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, БУНЦЛАУ хулине илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, БУНЦЛАУ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 ҫулхи февралӗн 12-мӗшӗ. № 276.

ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн черетлӗ пленумӗ ҫинчен

Информациллӗ пӗлтерӳ

Мускавра ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн черетлӗ 13-мӗш пленумӗ пулса иртнӗ. Пленумра обкомсен, крайкомсен, союзлӑ республикӑсенчи комсомолӑн Центральнӑй Комитечӗсен 1-мӗш секретарӗсем пулнӑ.

Пленум ҫак ыйтусене сӳтсе-явнӑ:

а) комсомол организацийӗсен ҫамрӑксем хушшинчи политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑхлатасси ҫинчен—докладчикӗ ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ Н. А. Михайлов юлташ.

б) ремесло тата чугун ҫул училищийӗсемпе ФЗО шкулӗсенчи ҫамрӑксем хушшинче комсомол организацийӗсен ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен—докладчикӗ ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ А. Е. Харламов юлташ.

Сӳтсе-явнӑ ыйтусем тӑрӑх тивӗҫлӗ постановленисем йышӑннӑ.

Пленумра пулнисем Сталин юлташ патне ҫырнӑ ҫырӑва пысӑк хавасланӑхпа йышӑннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем, ХӖВЕЛТУХӐҪ ПРУССИРЕ малалла наступлени туса пырса, МАРАУНЕН, ХУССЕНЕН, ВОНДИТТЕН, ВОКЕЛЕН, ГЛАНДАУ, ВАТТЕН, БАЗЕН, ВУЗЕН ялӗсене туртса илнӗ.

ПРЕЙСИШ АЙЛАУ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре февралӗн 10-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем пысӑк складсем тытса илнӗ. Складсенче малтанлӑха палӑртнӑ даннӑйсем тӑрӑх ҫаксем пур: автомашинӑсем—4.200, ещӗксем ӑшне хатӗрлесе хунӑ ҫӗнӗ тупӑ кӗпҫисем—1.000, тупӑ лафечӗсем—400, станковӑй пулемет кӗпҫисем—5.000, танк моторӗсем—400, автомобиль моторӗсем—250, мотоциклсем — 500, бронетранспортерсем—50, тягачсем—211, танксем валли запас пайӗсем тиенӗ вагонсем—100, автомашинӑсем валли запас пайӗсем тиенӗ вагонсем — 100, минӑсем — пӗр миллион, снарядсем—пӗр миллион, тӗрлӗрен ҫар пурлӑхӗ тиенӗ чугун ҫул вагонӗсем—980.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, февралӗн 11-мӗшӗнче, ДОЙЧ-КРОНЕ хулипе МЕРКИШ-ФРИДЛАНД хулине—ҫулйӗрсен паха узелӗсене, нимӗҫсен Померанири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене — ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, 30 ял ытла йышӑннӑ.

ШНАЙДЕМЮЛЬ хулипе ПОЗНАНЬ хулинче пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонӗсене пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

УКРАИНАРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре ОДЕР шывӗ урлӑ каҫнӑ та нимӗҫсен ОДЕР шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи нумай вӑхӑтлӑха вӑйлӑн ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ, тӑватӑ кун хушши ҫапӑҫса 60 километр таран шалалла кӗрсе кайнӑ, татнӑ вырӑна фронт тӑрӑх 160 километр таран аслӑлатнӑ.

Наступлени туса пырса, фронт ҫарӗсем ЛИГНИЦ, ШТЕЙНАУ, ЛЮБЕН, ГАЙНАУ, НОЙМАРК, КАНТ хулисене—ҫулйӗрсен паха узелӗсене тата нимӗҫсен Одер шывӗн хӗвеланӑҫ хӗрринчи оборонин хӑватлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—тытса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан ытти 500 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра —ПРИДЕМОСТ, ГРАМШЮЦ, ФРИДЕНСХАГЕН, КВАРИТЦ, ПРИМКЕНАУ, КОТЙЕНАУ, ГРЕМСДОРФ, НОЙДОРФ, ГРОСС ТИНЦ, ГРОСС БАУДИСС, КОСТЕНБЛЮД, ГАМФЕЛЬД, БРЕЙТАНАУ ятлӑ пысӑк ялсем.

КАТОВИЦЕ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ПШИНА хулипе ДЗЕДЗИЦЕ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, СТАРА ВЕСЬ, ЛОНКА, ГОЧАЛКОВИЦЕ, ЗАБЖЕГ, ЧЕХОВИЦЕ ялӗсене йышӑннӑ.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, 45 квартал тытса илнӗ.

ЭЛЬБИНГ хулине туртса илнӗ чухне БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем 2.700 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксем—33, бронетранспортерсем—35, тупӑсем—200, автомашинӑсем—790, паровозсем—40, вагонсем—1.141, пароходсем—2, боеприпассем, снаряжени тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—27. Тӑшманӑн, вилнисене кӑна шута илсен те, 5.000 салтакпа офицера ҫити пӗтнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 10-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 220 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура тата зениткӑй артиллери тӑшманӑн 26 самолетне ӳкернӗ.

Сталинла устав—колхоз пурнӑҫӗн ҫирӗп законӗ

Вунӑ ҫул каярах—1935 ҫулти февралӗн 11-мӗшӗнче — Мускавра колхозник-ударниксен Пӗтӗм Союзри Иккӗмӗш съезчӗ пухӑнчӗ. Ҫак съезд колхозсемпе колхозниксен пурнӑҫӗнче калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑчӗ. Унӑн историллӗ пӗлтерӗшӗ ҫакӑнта пулса тӑрать: малта пыракан колхозсен опытне шута илсе, вӑл ялхуҫалӑх артелӗн ҫӗнӗ Примерлӑ Уставне туса хатӗрлерӗ, ҫак Устав колхоз пурнӑҫӗн тӗп законӗ пулса тӑчӗ.

Колхозник-ударниксен Иккӗмӗш съезчӗ умӗнхи пилӗк ҫул хушшинче колхоз юхӑмӗ массӑллӑн пулса пычӗ, ҫав вӑхӑтра пирӗн ҫӗрӗҫӗнче колхоз стройӗ пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерчӗ. Ялхуҫалӑхне колхозла йӗркепе организацилени уссине ӗненсе илсе, совет хресченӗсем пӗччен те вак-тӗвек хуҫалӑхран яланлӑхах уйӑрӑлчӗҫ, колхоз ҫулӗ ҫине ҫирӗппӗн тӑчӗҫ. Сталин юлташӑн «Пур колхозсене те—большевикла колхозсем, колхозниксене вара пурне те пуян пурӑнакансем тумалла» текен лозунгне колхозниксемпе колхозницӑсен анлӑ массисем хӗрӳллӗн кӗтсе илчӗҫ. Харпӑрхӑй колхозӗн пӗрлешӳллӗ пуянлӑхне ӳстерессишӗн тата хайсен пуян пурнӑҫне чечеклентерсе ярассишӗн кӗрешес ӗҫре колхозниксем кӗске срокрах пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ.

Анчах та пурнӑҫ колхоз строительствин ҫӗнӗ ыйтӑвӗсене черете кӑларса тӑратса пычӗ. Колхозсен обществӑллӑ интересӗсене колхозниксен харпӑрхӑй интересӗсемпе мӗнле сыхӑнтарса пымалла? Колхоз производствине мӗнле тӗрӗс йӗркелесе пымалла? Колхозниксен ӗҫне мӗнле тӗрӗс организацилесе, мӗнле тӳлесе тӑмалла? Ҫак ыйтусене тӗрӗс татса пама государствӑн, колхозсемпе колхозниксен пурнӑҫ интересӗсем хушнӑ.

Ялхуҫалӑх артелӗн ҫӗнӗ Уставне Сталин юлташ хӑй хутшӑнса ӗҫленипе туса хатӗрленӗ. Ҫак Устав, колхозник-ударниксен Иккӗмӗш съезчӗ йышӑннӑскер, колхоз пурнӑҫӗпе ӗҫӗнчи мӗнпур тӗп ыйтусем ҫине, колхоз строительствин ҫӗнӗ те ҫӳллӗ пусӑмӗнче тухса тӑнӑ пур ыйтусем ҫине те уҫӑмлӑ ответсем пачӗ. Съезд ҫӗнӗ Примерлӑ Уставӑн никӗсне Сталин юлташ ҫакӑн пек вӗрентнине хучӗ: артель форми хальхи вӑхӑтра колхоз юхӑмӗн пӗртен-пӗр тӗрӗс форми пулса тӑрать, мӗншӗн тесен вӑл колхозниксен харпӑрхӑйӗн пурнӑҫ ыйтӑвӗсене вӗсен обществӑллӑ интересӗсемпе тӗрӗс сыхӑнтарса пыма май парать. Обществӑллӑ хуҫалӑх ӗҫе татса паракан тата тӗп хуҫалӑх пулса тӑрать, харпӑрхӑй хуҫалӑхӗ вара пулӑшса тӑракан хуҫалӑх пулса тӑрать тесе шутласа, съезд ҫӗнӗ Уставра колхозниксен кил вырӑнӗн пысӑкӗшне тата вӗсем харпӑрхӑй хуҫалӑхӗнче мӗн чухлӗ выльӑх-чӗрлӗх тытмаллине ҫирӗппӗн кӑтартса хӑварчӗ, ҫавӑн пекех тата колхозра мӗн-мӗн пӗрлештермеллине тата мӗн-мӗн пӗрлештермелле маррине кӑтартса хӑварчӗ. Колхозсене ӗмӗрлӗхех тата тӳлевсӗр усӑ курма ҫирӗплетсе панӑ ҫӗрпе мӗнле усӑ курмалли ҫинчен те Уставра паха кӑтартусем парса хӑварнӑ.

Миллионшар колхозниксемпе колхозницӑсем ялхуҫалӑх артелӗн ҫӗнӗ Уставне хӗрӳллӗн ырларӗҫ тата ӑна колхоз пурнӑҫӗн Сталинла Уставӗ тесе ят пачӗҫ. Ялхуҫалӑх артелӗн Примерлӑ Уставӗ тӑрӑх ӗҫлесе, колхозсем хӑвӑрт ӳссе пыма тытӑнчӗҫ, колхозсен экономикӑллӑ хӑвачӗ ҫулран-ҫулах ӳссе пычӗ. Акӑнакан ҫӗр лаптӑкӗ сарӑлса пычӗ, тырпул тухӑҫлӑхӗ хӑпарса пычӗ, выльӑх-чӗрлӗх хисепӗпе тухӑҫлӑхӗ ӳссе пычӗ. Колхозсем хуҫалӑхӑн ҫӗнӗ отраҫлӗсене аталантарса пычӗҫ, обществӑллӑ пуянлӑха ӳстермелли ҫӗнӗ майсем тупса пычӗҫ. 1937 ҫултах ӗнтӗ колхозсем пирӗн ҫӗршывра унччен нихҫан пулман пек вӑйлӑ тырпул: тӗштырӑсем — гектартан 11,45-шар центнер, сахӑр кӑшманӗ гектартан—180-шар центнер, ҫӗрмамӑкӗ гектартан—12-шер центнер пухса илчӗҫ. 1939, 1940 тата 1941 ҫулсенчи Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставки ҫӗрӗҫӗнчи ҫӗнӗ Уставпа хӗҫпӑшалланнӑ ӗҫҫыннисем тӗлӗнмелле пысӑк ҫитӗнӳсем тунине яр-уҫҫӑн кӑтартса пачӗ.

Совет Союзӗ ҫине вӑрӑ-хурахла, ирсӗррӗн тапӑнса, гитлерла Германи пирӗн пӗтӗм халӑхӑн, ҫавӑн пекех совет хресченӗсӗн мирлӗ ӗҫне татрӗ. Мирлӗ строительство тапхӑрӗ пӗтрӗ. Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ ирӗклӗхшӗн пыракан вӑрҫӑ тапхӑрӗ пуҫланчӗ. Пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗпе пӗрле, пирӗн ялхуҫалӑхӗн те хаяр тӗрӗслӳ витӗр тухмалла пулчӗ. Колхозсем умне ҫӗнӗ те кӑткӑс задачӑсем тухса тӑчӗҫ. Тӑван ҫӗршыв вӗсене ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫарӑн пысӑк ыйтӑвӗсене тивӗҫтерсе пыма чӗнчӗ.

Вӑрҫӑ условийӗсенче колхоз пурнӑҫӗн Примерлӑ Уставӗ государство заданийӗсене, ҫӗршывпа фронт хушнисене пурнӑҫа кӗртессишӗн пыракан кӗрешӳре колхозниксен тӗрӗсленнӗ хӗҫпӑшалӗ пулса тӑчӗ. Устава ҫирӗппӗн пӑхӑнса пыни пиншер те вуншар пин колхозсене вӑрҫӑ кӑларса тӑратнӑ йывӑрлӑхсене ӑнӑҫлӑн ҫӗнтерсе пыма кӑна мар, тата, ҫав йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, хайсен хуҫалӑхне малалла аталантарса пыма май пачӗ. СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ государствӑн тырпул хатӗрлемелли планне ӑнӑҫлӑн тултарнӑшӑн партипе совет работникӗсене наградӑласси ҫинчен йышӑннӑ Указсем, «Правда» хаҫатра пичетленекенскерсем, — колхозсем тунӑ ҫитӗнӳсене кӑтартса паракан чи уҫӑмлӑ тӗслӗхсем пулса тӑраҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен колхозӗсем ҫине шанса тӑрасси вӑрҫӑ кунӗсенче татах та ытларах ӳсрӗ. Тӑшман тапӑнса кӗнӗ районсенчи хресченсем колхозлӑ пурнӑҫӑн хакне уйрӑмах лайӑх ӑнланса илчӗҫ. Вӑхӑтлӑха тытса илнӗ районсенче нимӗҫсем колхозлӑ пурнӑҫа арката-арката янӑ. Вӗсем совет хресченӗсене пӗр пулӑшусӑр, асаплӑха кӗртсе ӳкерне чурасем тума хӑтланнӑ. Ҫакӑн чухне вара колхозниксем пирӗн колхозсем мӗнле пысӑк вӑй пулса тӑнине татах та ытларах туйса илчӗҫ. Ҫавӑнпа та хӑйсене ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн ҫийӗнчех хресченсем вӑрттӑн вырӑнсене хурса тӑшманран пытарса хӑварнӑ вӑрлӑхпа инвентаре турта-турта кӑларчӗҫ, ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗн пытарса хунӑ кӗнекисене кӑларса илсе, артель хуҫалӑхне ҫӗнӗрен йӗркелесе яма тытӑнчӗҫ.

Иртнӗ вунӑ ҫул хушшинче ялхуҫалӑх артелӗн Примерлӑ Уставӗ колхозсем йӗркеленсе, тӗрекленсе тата аталанса пырас ӗҫре хӑйӗн организацилекен тата мобилизацилекен хӑватлӑ вӑйне кӑтартса пачӗ. Анчах халлӗхе пирӗн кая юлса пыракан, хайсен хуҫалӑхне начар вӑйлатса пыракан тата государствӑн паха заданийӗсене пурнӑҫа кӗртеймен колхозсем пур пулсан, ҫакӑ вара, пуринчен малтан, Примерлӑ Устава тата вӑл хушнисене пӑсса ӗҫленинчен килет. Вырӑнсенчи хӑшпӗр работниксем юлашки ҫулсенче Устав ҫине кирлӗ пек ҫавӑрӑнса пӑхма пӑрахрӗҫ, ӑна ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлессишӗн большевикла кӗрешмеҫҫӗ. Устава пӑсса ӗҫленине час-часах лӑпкӑн пӑхса ирттерсе яраҫҫӗ.

Вӑрҫӑ условийӗсенче Устав пӗлтерӗшӗ тата унӑн колхозсене аталантарса пырас тӗлӗшри вырӑнӗ пӗчӗкленмест, пачах та урӑхла, вӑл пысӑкланать. Вӑрҫӑ вӑхӑчӗ тырпул тата промышленность валли чӗртавар ытларах ыйтать. Вӑл ыйтнине тивӗҫтерсе пырас тесен, колхозсенче обществӑллӑ ҫӗрпе тӗрӗс усӑ курмалли ҫинчен Устав кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать, ҫӗре салатса пӗтермелле мар, ӑна лайӑхрах ӗҫлесе, унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырас пулать. Вӑрҫӑ вӑхӑчӗ выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем ытларах ыйтать. Вӑл ыйтнине тивӗҫтерсе пырас тесен, колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышне пур майпа та ӳстерсе пымалли ҫинчен Устав кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать. Вӑрҫӑ нумай ӗҫ пайне, нумай ялхуҫалӑх машинисене тата колхозсен туртӑм вӑйне мирлӗ ӗҫрен уйӑрчӗ. Вӑхӑтлӑха пулнӑ ҫак ҫухатӑва витес тесен, колхозри ӗҫпе производствӑна тӗрӗс организацилемелли ҫинчен, ӗҫри дисциплинӑна ҫирӗплетмелли ҫинчен тата колхозсен ӗҫӗпе производствинчи резервсемпе туллин усӑ курмалли ҫинчен Устав кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать.

Примерлӑ Устава ҫирӗппӗн пӑхӑнса ӗҫлессишӗн тата партипе правительство ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе йышӑннӑ решенисене пурнӑҫлассишӗн кӗрешесси — вырӑнсенчи партипе совет организацисен колхозсене ертсе пырас тӗлӗшри чи пысӑк ӗҫӗ пулмалла. Ҫак задача ирӗке кӑларнӑ районсенче, колхозсене ҫӗнӗрен йӗркелесе ямалла тата колхоз йӗркине ҫирӗплетмелле пулнӑ ҫӗрте, уйрӑмах ҫивӗччӗн тӑрать. Колхозниксемпе колхозницӑсене Уставӑн чи кирлӗ кӑтартӑвӗсем ҫинчен ывӑнма пӗлмесӗр ӑнлантарса пымалла, вӗсене обществӑллӑ хуҫалӑхшӑн, колхозри обществӑллӑ пурлӑха сыхласа усрассишӗн тата нумайлатассишӗн ответлӑ пулма вӗрентсе воспитани памалла.

Ялхуҫалӑх артелӗн Сталинла Уставӗ колхозсене вӑрҫӑ тӗрӗслевне чыслӑн тӳссе ирттерме пулӑшрӗ. Гитлерла Германие таткӑланах ҫӗмӗрсе тӑкассишӗн ҫӗнтерӳллӗн ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫара колхозсем пулӑшасси кунран кунах ӳссе пырать. Тӑшмана пӗтӗмӗшпех ҫӗнтерни колхозсене, ҫавӑн пекех ССР Союзӗн пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне, малалла ӳссе чечекленсе пыма анлӑ ҫул уҫса парӗ. Ялта каллех мӗн кирли ытлӑн-ҫитлӗнех пулӗ, унта пурнӑҫ татах та илемлӗрех пулӗ. Ҫак кӗтнӗ куна ҫывхартас тесен, Сталинла Устава ҫирӗппӗн пӑхӑнса пымалла, колхозсене ывӑнма пӗлмесӗр ҫирӗплетсе пымалла, ҫапла вара хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн экономикӑпа вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчи хӑватне ӳстерсе пымалла.

(«Правда» хаҫатӑн февралӗн 11-мӗшӗнчи умстатьи).

Совет Союзӗн Маршалӗсене Г. К. Жукова, И. С. Конева тата К. К. Рокоссовские Польша республикин аслӑ орденӗсемпе наградӑлани

ВАРШАВА, февралӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Польша ҫӗршывӗпе Польша столицине — Варшава хулине, ҫавӑн пекех Польшӑн вӑхӑтлӑх столицине Люблин хулине тата Польшӑн авалхи столицине Краков хулине фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫар ҫав тери пысӑк та паха ӗҫсем тунине палӑртса тӑвас тесе, Польша Халӑх Совечӗн Президиумӗ февралӗн 8-мӗшӗнче йышӑннӑ решени тӑрӑх Польша Республикин пӗрремӗш класлӑ ҫӑлтӑрлӑ аслӑ орденне, «Виртути Милитари» ятлӑскерне парса, ҫак Маршалсене наградӑлама йышӑннӑ: Белоруссири 1-мӗш фронтӑн командующине Совет Союзӗн Маршалне Г. К. Жукова, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн командующине Совет Союзӗн Маршалне И. С. Конева тата Белоруссири 2-мӗш фронтӑн командующине Совет Союзӗн Маршалне К. К. Рокоссовские. Постановленире ҫапла каланӑ: ҫак наградӑсене пани Польша халӑхӗ хӑйне ирӗке кӑларакансене тав тунине пӗлтерет, тенӗ.

Рабочисемпе служащисен пахчисем ҫинчен

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1945 ҫулта рабочисемпе служащисене пахчасем валеҫсе парасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Ҫав постановлени тӑрӑх рабочисен уйрӑм тата ушкӑнлӑ пахчисене малалла аталантарассине палӑртнӑ.

Совнарком облаҫсенчи, крайсенчи, хуласенчи Советсене, республикӑсен Совнаркомӗсене пахчасен лаптӑкне малалла ӳстерес тӗлӗшпе, профсоюз организацийӗсемпе пӗрле уйрӑм тата ушкӑнлӑ пахчасен ӗҫне рабочисене, служащисене, фронтовиксен ҫемьисене тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене ытларах хутшӑнтарас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнма хушса хӑварнӑ.

Рабочисемпе служащисен пахча-ҫимӗҫсем туса илмелли ҫӗр лаптӑкне ҫӗнӗрен ӳстерес текен предприятисемпе учрежденисене апрелӗн 1-мӗшӗччен хуласен, рабочи тата дача поселокӗсен ҫӗрӗсенчен, государство ҫӗр фондӗнчен ҫӗр уйӑрса памалла. Ҫав ҫӗрсене предприятисемпе учрежденисене 5—7 ҫуллӑха ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата пахча-ҫимӗҫӗсем туса илме совхозсен, подсобнӑй хуҫалӑхсен, предприятисен ирӗклӗ ҫӗрӗсене те уйӑрса пама юрать.

Чи лайӑх та сывӑх ҫӗр лаптӑкӗсене чӑн малтан фронтовиксен ҫемьисене, ҫар служащийӗсене тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене уйӑрса памалла.

Предприятисемпе учрежденисенчи администрацин уйрӑм пахчасем тума уйӑрса панӑ ҫӗре рабочисемпе служащисем хушшинче тепӗр хут валеҫме юрамасть.

Рабочисемпе служащисем предприятипе учрежденири ӗҫрен тухса каяс пулсан, вӗсем ҫӗрпе усӑ курас тивӗҫе (пахча-ҫимӗҫ туса илнӗ хыҫҫӑн) ҫухатаҫҫӗ. Ку йӗрке Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ, урӑх ӗҫе куҫарнӑ, пенси ҫине куҫнӑ, инвалида тухнӑ, чирпе ӗҫрен кайнӑ, вӗренме кӗнӗ ҫынсене пырса тивмест. Хӑйӗн ҫӗрне урӑх ҫынна панӑ рабочисемпе служащисем ҫӗрпе усӑ курма пултараймаҫҫӗ. Облаҫсемпе крайсенчи Советсен исполкомӗсене, республикӑсен Совнаркомӗсене, Халӑх Комиссариачӗсене, предприятисемпе учрежденисен тата организацисен руководителӗсене ҫуракине хатӗрленес ӗҫе халех анлӑн пуҫарса яма хушнӑ. Рабочисемпе служащисен пурин те ҫителӗклӗ вӑрлӑх пулмалла, ҫӗрулми тӑррисене хатӗрлеме вӗсене агротехникӑллӑ пулӑшу памалла т. ыт. те.

Монгол Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ Мускавран тухса кайни

Ӗнер, февралӗн 11-мӗшӗнче, Монгол Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ Мускавран тухса кайнӑ. Делегаци премьер-министр заместителӗ Маджиг ертсе пырать.

Ҫурҫӗр вокзалӗнче делегацие ҫаксем ӑсатса янӑ: Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ Ю. М. Каганович, Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн хӗвелтухӑҫ управленийӗн начальникӗ Н. И. Сладковский, Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн Отдел Заведующийӗн Заместителӗ М. Ш. Бахитов, Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн Протокол чаҫӗн Начальникӗ В. Г. Кириллов тата Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн ытти ответлӑ работникӗсем. Ҫавӑн пекех делегацие Монгол Халӑх Республикин СССР-ти Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посланникӗ Самбу тата унӑн сотрудникӗсем ӑсатса янӑ.

МОПР ӗҫне вӑйлататпӑр

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. МОПР организацийӗсенче отчетпа суйлав пухӑвӗсем ирттернӗренпе районра МОПР ячейкисен ӗҫӗсем чылай лайӑхланчӗҫ. Юлашки вӑхӑтра районра ҫӗнӗрен 11 ячейка организациленӗ.

Хӗрлӗ Чутайри вӑтам шкулта вирҫӗ ячейка ӗҫлет. Ячейка бюровӗсене шкулти партипе комсомол организацийӗсем куллен пулӑшса параҫҫӗ. МОПР членӗсем хушшинче ӑнлантарулла ӗҫе туса пыма агитаторсем уйӑрса хунӑ. МОПР членӗсем член укҫине вӑхӑтра тӳлесе тӑраҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра ирӗклӗ взнос 110 тенкӗ пухнӑ. Кунта МОПР членӗсен йышӗ куллен ӳссе пырать. Паянхи куна шкулӗпе 286 член шутланать.

Ҫавнашкалах Атнарти вӑтам шкулта, Тарабайри «Агроном» колхозри, Ҫӗнчеремесри Чапаев ячӗпе тӑракан колхозри МОПР ячейкисем аван ӗҫлеҫҫӗ. П. Т.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пуçламĕш парторганизацисем çумĕнчи политшкулсем çинчен

Парти организацийĕсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенчи пек нихăçан та вăйлăн ÿсмен. Вăрçă çулĕсенче пирĕн Ленин—Сталин партине пиншер рабочисемпе колхозниксене, интеллигентсене илнĕ. Чăваш республикинчи парторганизаци йышĕнчен 30 проценчĕ—ВКП(б) членĕн кандидачĕсем. Республикăра çамрăк коммунистсем ытларах шутланакан парторганизацисем те сахал мар. Çавăнпа та ĕнтĕ коммунистсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парасси—парторганизацисен тĕп задачи пулса тăрать. Мĕншĕн тесен пирĕн парти «йыш тĕлĕшĕнчен пысăк пулнипе кăна мар, чи малтан, вĕсен пахалăхĕпе вăйлă пулса тăрать» (Сталин, «Ленинизм ыйтăвĕсем», стр. 593).

ВКП(б) Обкомĕн ХХ-мĕш пленумĕ, коммунистсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне ÿстерес шутпа, пуçламĕш парторганизацисем çумĕнче политшкулсем организацилеме йышăнчĕ. ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, политшкулсен программине «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренессине кĕртнĕ. Çак икĕ кĕнеке пирĕн кадрсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне çĕклес тĕлĕшпе питех те паха вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсенче большевиксен партийĕ социализм çĕнтерĕвĕшĕн, Отечественнăй аслă вăрçăра фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерессишĕн кĕрешнине уçăмлăн кăтартса панă.

Пирĕн республикăра халĕ пуçламĕш парторганизацисем çумĕнче 250 политшкул ĕçлет. Вĕсенче коммунистсемпе комсомолецсем 5000 çын, партире тăманнисем 300 çынна яхăн вĕренеççĕ. Политшкулсене ВКП(б) райкомĕсен пропагандисчĕсем тата пĕлÿ тĕлĕшĕнчен малта тăракан коммунистсем ертсе пыраççĕ. Политшкул руководителĕсенчен 30 проценчĕ—аслă шкулсенчен вĕренсе тухнăскерсем.

Политшкулсем иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче ĕçлеме пуçланă. Малтанах вĕсенче Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклада вĕреннĕ.

Политшкулсен икĕ уйăх хушшинчи ĕçĕсем коммунистсемпе комсомолецсем большевиксен партийĕн историйĕпе теорине вĕренессипе вăйлăн интересленнине, хăйсен идейăпа политика пĕлĕвне ÿстерессишĕн тăрăшнине кăтартса парĕç. Халĕ ĕнтĕ политшкулсен ĕçне лайăх организацилени те кăтартса паракан тĕслĕхсем нумай курма пулать. Акă, сăмахран, ВКП(б) Елчĕк райкомĕ çумĕнчи политшкулăн ĕçне тишкерсе тухар. Унта, пуринчен ытла, сахалтарах вĕреннĕ коммунистсемпе комсомолецсем вĕренеççĕ. Занятисем вăхăтра тата активлăн пулса иртеççĕ. Политшкулта вĕренекенсем занятисене йĕркеллĕ çÿреççĕ, материалсене тимлĕн вĕренме тăрăшаççĕ. Шкул руководителĕ Ласточкина юлташ вĕренÿ ĕçне калаçу меслечĕпе туса пырать. Кашни занятие пуçламĕшĕнче вăл иртнĕ занятире вĕреннĕ темăпа калаçу иртерет, ун хыççăн вара вĕренекенсем умне çĕнĕ ыйтусем лартать. Вĕренекенсем темиçе хутчен тухса калаçаççĕ. Хăшпĕр ыйтусем тăрăх юлташла калаçу пуçланать. Шкул руководителĕ калаçу мĕнле пынине сăнаса тăрать тата ăна ертсе пырать. Хăшпĕр чухне çитменлĕхсене палăртса, вĕсене тÿрлетме пулăшать. Занятисенче географи карттипе усă кураççĕ. Юлашкинчен вара заняти руководителĕ кам мĕнле ответсем панине пĕлтерет. Çав ĕçре вăл карттăпа тата диаграммăсемпе усă курать. Çакăн пек туни занятисене активлăн та интереслĕн иртерме пулăшать. Заняти пĕтес умĕн мĕн вĕренни çинчен каласа параççĕ. Çавăн чухне занятире мĕнле ыйтусене тĕп вырăна хумалли тата мĕнле ыйтусемпе ытларах вĕренмелли çинчен кăтартаççĕ, çитес занятире мĕн вĕренмелли çинчен каласа параççĕ.

Аслă Елчĕк ял Совечĕ çумĕнчи парторганизаци те (политшкул руководителĕ Васильев юлташ) начар мар ĕçлет. Çавăн пекех Лаш Таяпа ял Советĕнчи (парторганизаци секретарĕ Ильин, политшкул руководителĕ Дмитриев юлташсем), Тимер ял Советĕнчи (парторганизаци секретарĕ Зайцев юлташ, политшкул руководителĕ Портнов юлташ), Октябрьски районри Караньял ял Советĕнчи политшкул руководителĕ Мокеев юлташ) тата Кутемерти парторганизаци политшкул руководителĕ Тюмерова юлташ) çумĕнчи политшкулсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах нумай политшкулсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Политшкулсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе вĕренекенсен йышне тĕрĕс суйласа илни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Политшкулсем партиллĕ-политикăллă ĕçре палла вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем вĕренекенсене большевиксен партийĕн историйĕпе паллаштарма тата марксизм-ленинизм теорине вĕренме хăнăхтарма тивĕçлĕ. Çавăнпа та вĕренекенсене суйласа илнĕ чухне вĕсем мĕн чухлĕ вĕреннине тата мĕнле вĕренме пултарнине шута илмелле. Анчах та хăшпĕр районсенче мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене политшкулсене явăçтарма тăрăшнă. Çавăн чухне вĕсем кам мĕн чухлĕ вĕреннине шута илмен. Çапла сăмахран, Шупашкар районĕнче МТС çумĕнчи политшкулта вĕренме старши агронома Николаева юлташа çырнă. Вăл ялхуçалăх институтне вĕренсе пĕтернĕ. Çав районри Шемшер ялĕнчи политшкула вĕренме çырнисем хушшинче Хлебников, А. В. Васильева, К. В. Васильева юлташсем пур. Вĕсем те аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Паллах, асăннă юлташсем пурте хăйсем тĕллĕн вĕренме пултараççĕ. Хăйсем тĕллĕн вĕренме пултарайман юлташсем кăна политшкулсенче вĕренме тивĕçлĕ.

Хăшпĕр районсенче политшкулсен хисепне ытлашши ÿстерсе янă. Çапла, Етĕрне районĕнче 18 политшкул, Шăхасан районĕнче 15 политшкул, Муркаш, Йĕпреç, Канаш районĕсенче 13-шер политшкул тунă. Çав районсенчи политшкулсенче вĕренекенсен хисепĕ 200—300 çынран та иртет. Пуриншĕн те паллă, политшкулсен йышне ÿстерессишĕн тăрăшни политшкулсене ертсе пыма çынсем тупса лартас ĕçре чăрмав кÿрет. Халĕ политшкул руководителĕсем хушшинче çав ĕçе туса пыма пултарайман çынсене те курма пулать. Сăмахран, Шăмăршă районĕнче политшкулсене ертсе пыракан 10 çынран иккĕшĕ пуçламĕш шкулсенчен кăна вĕренсе тухнă. Пĕр çын 2 çул кăна вĕреннĕ. Политшкулсене ертсе пыракансем хушшинче ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕсем пачах та çук. Вăрмар, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсенче политшкулсене пĕлÿ çителĕклĕ çук çынсем ертсе пыраççĕ. Политшкулсене ертсе пыма руководительсене çавăн пек уйăрса лартни ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн решенине пăсни пулать.

Нумай политшкулсенче руководительсем çителĕклĕ пĕлÿсĕр пулнă пирки тата вĕсем хăйсен ĕçĕ çине тимлĕн пăхманнине пула занятисем начар иртеççĕ. Çапла, Çĕмĕрле районĕнчи пĕр политшкулăн руководителĕ вĕренекенсене 4—5 çыншар ушкăнсене пайланă та, занятисене «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вуласа панипе иртнернĕ.

Политшкулсене организацилесси çине Кувакино районĕнче ответсăр пăхнă. Унта политшкулсем темĕн чухлех организацилесе тултарнă. Анчах вĕсен ĕçне райком работникĕсенчен никам та ертсе пымасть, вĕсен ĕçĕпе никам та интересленмест. Мишуковски политшкулта «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕрентме партире тăман çынна хушнă. ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Емашов юлташ, политшкула ертсе пыма тивĕçлĕскер, политшкулта сайра хутра кăна пулать.

Политшкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Политшкулсене ертсе пыма, чи малтанах, штатра тăракан пропагандистсене лартмалла. Политшкулсенче ĕçлесси—штатра тăракан пропагандистсен кулленхи ĕçĕ пулса тăрать. ВКП(б) райкомĕн кашни пропагандисчĕ 2—3 шкулта ĕçлеме тивĕçлĕ. Апла пулсан, вĕсене хуçалăх ĕçĕсене пурнăçа кĕртме ялсене ярассинчен хăтармалла. Политшкулсенче ĕçлеме ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕнче, парткабинетсенче ĕçлекен работниксене явăçтармалла. Вĕсемсĕр пуçне политшкулсене ертсе пыма теорие лайăх пĕлекен тата пропаганда ĕçĕн опычĕпе пуян работниксене явăçтармалла.

Парти комитечĕсен тата вĕсен пропаганда отделĕсен уйрăмăнах политшкулсенче занятисене тĕрĕс организацилесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕреннĕ май, вĕренекенсене ВКП(б) историйĕн чи кирлĕ тапхăрĕсене ăнланса илме пулăшмалла. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» тăватăмĕш сыпăкне вĕреннĕ чухне квалификациллĕ лекторсен вăйĕпе лекцисемпе калаçусем иртермелле. Ун хыççăнхи сыпăксене вĕреннĕ чухне ялхуçалăх артелĕн Сталинла уставĕпе Конституци çинчен калаçусем иртерес пулать. Большевиксен партийĕн историйĕнчи хĕрÿллĕ тапхăра—Отечественнăй вăрçă тапхăрне тарăннăн вĕренмелле. Пур сыпăксене те вĕренсе пĕтернĕ хыççăн «ВКП(б) историйĕ мĕне вĕрентет» темăпа калаçу иртермелле.

Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи» ятлă кĕнекине уйрăм докладсем, приказсем тăрăх вĕренмелле. Уйрăмăнах пирĕн халăхăн вăрçăри ĕçĕ — тĕрĕс ăс пулнине тĕплĕн ăнлантарса памалла, пирĕн халăхăн хăватлă вăйне. Ленин—Сталин партийĕн организаторла рольне кăтартса памалла.

Политшкулсенче вĕренÿ ĕçне лайăх йĕркелесси политшкул руководителĕсен пĕлĕвĕнчен нумай килет. Çавăнпа та ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен политшкулсен руководителĕсене куллен пулăшса, вĕрентсе тăмалла. ВКП(б) Елчĕк райкомĕ политшкул руководителĕсем валли ялан ĕçлекен семинар организацилесе питех те тĕрĕс тунă.

Политшкулсенче вĕренекенсене пирĕн партин политикине тĕрĕс ăнланса илме тата кĕнекепе ĕçлеме вĕрентмелле. Çакна тума вĕренекенсене вулама, вуланине çырса пыма, карттăпа усă курма вĕрентес пулать.

Вĕренÿ ĕçне программăна çураки ĕçĕсем пуçланиччен вĕçлемелле туса организацилемелле.

Пуçламĕш парторганизацисем çумĕнчи политшкулсем—кадрсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне ÿстермелли паха май пулса тăраççĕ. Вĕсем ялти коммунистсемпе комсомолецсене ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме хĕçпăшаллантараççĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Çураки валли лайăх вăрлăхсем хатĕрлер

Çураки валли лайăх вăрлăхсем хатĕрлесси — кăçал тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе тумалли паха мероприятисенчен пĕри пулса тăрать. Çĕре темĕн чухлĕ лайăх çемçетсен те, удобренисем темĕн чухлĕ нумай таксан та, вăрлăх начар пулсан тухăçлă тырпул туса илме май çук. Мĕншĕн тесен «начар вăрлăхран ырă тырă ан кĕт» тет халăх сăмахĕ. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çĕрĕç организацийĕсен руководителĕсене çитес çураки валли лайăх вăрлăхсем хатĕрлесси пирки темиçе хутчен те кăтартса панă. Обкомпа Совнарком колхозсене вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисенче сăнаса пăхман вăрлăхсем акма чарнă.

Çураки вăхăчĕ çитесси нумай юлмарĕ ĕнтĕ. Анчах та хальхи вăхăтра вăрлăхсене тасатасси тата вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслесси чылай районсенче пачах та çителĕксĕр пырать-ха.

Пуриншĕн те паллă, вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисен вăрлăхсем мĕнле шăтнине пирвайхи хут 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тĕрĕслесе пĕтермелле пулнă. Колхозсенчи вăрлăхсене тĕрĕслес тĕлĕшпе лабораторисен, райçĕрĕç пайĕсенчи агрономсен тата МТС агрономĕсен хăйсен ĕçлемелле. Вĕсен колхозсенчи вăрлăхсене суйласа илсе, çав вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслемелле тата колхоз правленисене кирлĕ кăтартусем памалла. Вăрлăхсем кондицие ларман пулсан, вĕсене тепĕр хут тасатса сортлама хушмалла. Апла пулин те, Муркаш районĕнче (главнăй агроном Албутов юлташ) февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне те лабораторире вăрлăхсен 9 процентне çеç сăнаса тухнă. Вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕç çине Чкаловски районра (главнăй агроном Миронова юлташ), Элĕк районĕнче (главнăй агроном Кузьмина юлташ), Йĕпреç районĕнче (главнăй агроном Громов юлташ), Сĕнтĕрвăрри районĕнче (главнăй агроном Спиридонов юлташ), Красноармейски районра (главнăй агроном Архипов юлташ) сÿрĕк пăхаççĕ. Çав районсен колхозĕсенчи вăрлăхсен 70—85 процентне халĕ те тĕрĕслесе тухман-ха. Асăннă районсенчи лабораторисем вĕсем патне колхозсем вăрлăхсем илсе пырасса кĕтсе лараççĕ. Райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сен агрономĕсем вара ку епĕçе нимĕн те шарламаççĕ. Ĕç çине çавăн пек ответсăр пăхнине халех пĕтермелле.

Элĕк районĕнче лаборатори витĕр кăларнă вăрлăхсенчен 86 проценчĕ кондицие лармасть. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай, Советски, Комсомольски, Шупашкар районĕсенче те кондицие ларман вăрлăхсем тĕрĕсленĕ хисепрен 50—70 процент шутланаççĕ. Çакă вăл вăрлăхсене тасатас ĕçе ятшăн кăна туса иртернĕ пирки пулнă. Уншăн, паллах, райçĕрĕç пайĕсен руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем вăрлăхсене тасатас ĕç çине вăхăтра кирлĕ пек çавăрăнса пăхман.

Пирĕн республикăн колхозсенчи вăрлăх участокĕсене лайăх вăрлăхсем акса хăварма çителĕклĕ таранах сортлă вăрлăхсем пур. Анчах та Госсортфондăн склачĕсенчен сортлă вăрлăхсене илесси чăтмасăр начар пырать. Уйрăмăнах çакă вăл Элĕк, Тăвай, Комсомольски районĕсенче япăх. Сортлă вăрлăхсем улăштарса илес ĕçе Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Чкаловски, Пăрачкав районĕсенче пачах та тытăнман-ха.

Вăхăта вăраха ямасăр, колхоз руководителĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен вăрлăх фончĕсене хывса çитерес, вĕсен шăтас пахалăхне лабораторисенче тĕрĕслес тата сортлă вăрлăхсем улăштарса илес ĕçе хĕрÿллĕн тытăнмалла. Çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртмесĕр тухăçлă тырпул туса илме çук. Халĕ ĕнтĕ калаçса ларма вăхăт мар, ĕçлес пулать.

Çуракине хатĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). «Красная Звезда» колхоз иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ, государство умĕнчи обязательствăсене тыслăн пурнăçларĕ. МТС ĕçленĕшĕн аванс шучĕпе 1945 çулшăн 245 центнер тырă панă. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне пур выльăхсем енĕпе те тултарнă.

Кăçалхи çул колхозниксемпе колхозницăсем иртнĕ çулхинчен лайăхрах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Вăйлă тырпул туса илес ĕçре çуракине вăхăтра иртерни пысăк вырăн йышăнать. Çуракине кунта лайăх хатĕрленеççĕ. Вăрлăхсене пурне те сортласа хунă. Вĕсен шăтас пахалăхне районри вăрлăх лабораторийĕнче тĕрĕсленĕ. Вĕсем пурте лайăх шăтаççĕ. Çĕре лайăхрах апат парас шутпа, колхозниксем кĕркуннерех вара уя 5800 лав тислĕк кăларнă. Тислĕк лайăх çĕртĕр тесе, ăна пĕр çĕре купаласа пыраççĕ. Вăтам шутпа илсен, кашни куп уя 12 лав тислĕк тухать. Кашни колхозник кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухассишĕн тăрăшса ĕçлет. Паянхи кун тĕлне 70 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 70 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ. Колхоз тимĕрçи М. Родионов машинăсене, плугсене юсаса хунă. Плугсем, сÿресем çителĕклĕ. Платниксем С. Алексеев, А. Прокопьев юлташсем çĕнĕрен 24 сÿре тунă. Хăмăтсемпе ĕнерчĕксем çителĕклĕ. Çĕнĕ кĕççесем 51 хатĕрленĕ. Пăявсемпе тилхепесем те çителĕклĕ.

— Эпир çуракине тухма хатĕрленсе çитрĕмĕр,—тет колхоз председателĕ Иванов юлташ.

С. ШАДИН.

Тракторсене юсас ĕç аван пырать

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ кăçал тракторсене юсас енĕпе нумай лайăххрах ĕçлет. 1944 çулхи IV-мĕш кварталта 8 трактор, 6 сеялка, 6 культиватор, 14 трактор плугĕ юсаса, çак енĕпе плана 100 процент тултарнă. Январь уйăхĕнче вара ку плана 175 процент пурнăçланă.

— Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем пире ĕçре хавхалантараççĕ,—теççĕ трактористсем.

Кашни тракторист хăй валли запаслă пайсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме тăрăшать, хăйне çирĕплетсе панă трактора е ытти ялхуçалăх машинисене лайăххрах тата хăвăртрах юсаса пĕтерессишĕн пур вăйя хурса ĕçлет.

МТС коллективĕ тракторсене юсас ĕçе мартăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме обязательство илнĕ. Çĕмĕрле МТС-не социализмлă ăмăртăва чĕннĕ.

П. ТИХОНОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсен, Вырăнти Топливо промышленность Управлени предприятийĕсен тата инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсен, вырăнти топливо промышленность Управлени предприятийĕсен тата инвалидсен коопераци артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1945 çулхи январь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

Апат-çимĕç комбиначĕсен ăмăртăвĕнче Вăрнар районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Жилкин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) мала тухнă. Вăл январьти плана 173,9 процент тултарнă, çапла вара продукци туса кăларассине, иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 17,6 процент ÿстернĕ. Çакна хисепе илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Улатăр районĕнчи апат-çимĕç комбинатĕнчен илсе Вăрнар районĕнчи апат-çимĕç комбинатне памалла тунă, ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 4.000 тенкĕ укçа панă.

Январь уйăхĕнче Улатăр, Йĕпреç, Куславкка, Красноармейски, Кувакино, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсенчи тата Канаш, Шупашкар хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Вырăнти топливо промышленность Управлени предприятийĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкар вăрманпромхозĕ (директорĕ Кобяков юлташ, хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) мала тухнă. Вăл январь уйăхĕнчи плана вутă хатĕрлес енĕпе 129 процент, турттарас енĕпе 138 процент тултарнă. Çавна шута илсе, Шупашкар вăрманпромхозне Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 20.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Январь уйăхĕнчи плана иртерсе тултарнă предприятисене ăмăртура палăрнă работниксене премилеме: Улатăр вăрманпромхозне (директорĕ Горланов юлташ) 15.000 тенкĕ, Çĕрпÿ вăрманпромхозне (директорĕ Борисов юлташ) тата Вăрнар вăрманпромхозне (директорĕ Васильев юлташ) 10.000-шер тенкĕ панă.

Инвалидсен коопераци артелĕсен ăмăртăвĕнче Йĕпреçри «Помощь» артель (председателĕ Ларин юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Соколов юлташ) мала тухнă. Вăл январь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 128,6 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 166,5 процент тултарнă. Çавна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Канашри «Красный воин» артельтен илсе, Йĕпреçри «Помощь» артеле памалла тунă тата ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 13.000 тенкĕ укçа панă.

Январь уйăхĕнчи плана иртерсе тултарнă артельсен ăмăртура палăрнă работникĕсене премилеме Сĕнтĕр районĕнчи Ильинкăри «Производственник» артеле 6000 тенкĕ, Канашри «Красный воин» артеле 5000 тенкĕ укçа панă.

Январь уйăхĕнче Шупашкарти «Чебторгин» артель лайăх ĕçленине палăртнă.

Çĕнĕ учебниксем

Фалеевăпа Перышкин çырнă «Физика» (II-мĕш пайĕ тулли мар вăтам шкул валли) пичетленсе пĕтнĕ. Февраль уйăхĕнче Всесвятский çырнă «Ботаника» тухать.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ февралĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Голландири Неймеген хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Рейн облаçĕнчĕ Циффлих, Ниль, Краненберг, Фрассельт пункчĕсене туртса илнĕ, халĕ вĕсем тăшманпа Рейхсвальд вăрманĕн хĕвеланăç хĕрринче çапăçаççĕ.

Моншау хулинчен çурçĕр хĕвелтухăçнерехри районра (Германи) союзниксен çарĕсем Гаршейдт хулипе Шмидт хулине тăшманран тасатнă. Шмидт хулинчен икĕ миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Хазенфельд хули патне пырса тухнă. Кăштах кăнтăртарахра Прюм хулинчен çурçĕртерехри районра союзниксен пехоти Ольцхейм пунктне йышăннă хыççăн Нейендорф хулине кĕнĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Гонденбретт хулине йышăннă. Зинц хулинчен çур миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Баннхольц вăрманне тăшманран тасатнă. Ку районра тăшман танкĕсемпе пехотин контратакине сирсе янă.

Хагенау хулинчен хĕвелтухăçнерехре (Лотарринги) Рейн шывĕ улăхĕнче Обергофен хулине тăшманран тасатнă. Кăнтăр Эльзасра Рейн шывĕн хĕвеланăç хĕрринче тăшман хирĕç тăнине сирсе янă.

Союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче кун каçиччен 1.049 нимĕçе тыткăна илнĕ. Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем хĕвеланăç тата вăтаçĕр Германире тĕрлĕ вăрçă объекчĕсене тапаннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 23 самолетне персе ÿкернĕ тата çĕр çинче 41 самолет пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 24 самолечĕ хăйсен базисене каялла таврăнман.

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, союзниксем Неймегенран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пит йывăр вырăнта наступлени туса пынă. Рейн облаçĕнче, Вилертан кăнтăртарахра, союзниксен чаçĕсем Рейхсвальд вăрманне кĕрсе Шоттхейдене йышăннă. Тыткăна лекнисен шучĕ 3.000 çынтан иртет.

Артиллерипе миномётсем çав тери вăйлă персе тăнă пулин те, союзниксен çарĕсем Шваммeнауэль пĕвин çурçĕр вĕçне çитнĕ. Нимĕçсем шлюзсене пурне те сирпĕнтерсе янă, анчах пĕви чиперех тăрса юлнă. Урфталь пĕвинчен шыв каякан каналсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Çавăн пирки вара Рур шывĕ виçĕ фута çити тулнă. Союзниксем Хазенфельд хулине йышăнса илнĕ. Вăл хула Шваммeнауэль пĕвинчен 1200 ярд хĕвелтухăçнерехре ларать.

Прюмран çурçĕртерехри районра союзниксем Нейендорфа йышăннă хыççăн Вильверад патне çитнĕ.

Сюр шывĕн тепĕр енче, Боллендорфран 2,5 миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре кĕрешекен союзниксен чаçĕсем çурçĕр-хĕвелтухăçнелле виçĕ чĕрĕк миля малалла куçнă.

Хагенауран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Рейн сывăхĕнче, союзниксен çарĕсем Модер шывĕ урлă каçса, Обергофенран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре чугун çул станцине тытса илнĕ. Обергофена тăшманран тасатас тĕлĕшпе çапăçусем пулса иртнĕ. Друзенхейм сывăхĕнче тăшман союзниксене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Танксем вăйлăн пулăшнипе тăшман çарĕсем контратака тунă пирки, союзниксен чаçĕсен каялла чакмалла пулнă.

Кольмар сывăхĕнче хупăрласа илнĕ çĕрте çапăçнă вăхăтра темиçе ушкăн нимĕçĕ тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн тĕрлĕ объекчĕсене тапаннă. Февралĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Ганновер хулине тапаннă. Çăмăл бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем çĕр каçипех тăшманăн Клеве—Рейне—Гамм—Кельн хулисен тăватă кĕтеслĕхĕнчи çарĕсене пыра-пыра тапаннă.

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Италире 5-мĕш армин фронтĕнче союзниксен патрулĕсем, хĕрÿллĕн кĕрешсе пырса, хăшпĕр районсенче тăшман хушшине чылай кĕрсе кайнă. 8-мĕш армин фронтĕнчи малти позицисенче улшăнусем çук.

Берлинри лару-тăру

ПАЛЛА ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ШВЕЙЦАРИЕ ТАРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинран илнĕ юлашки хыпарсем тăрăх, Германи столицинче пур предприятисем те ĕçлеме пăрахнă, питех те кирлĕ предприятисем кăна ĕçлеççĕ. Служащисемпе рабочисене пурне те фольксштурм çарне мобилизациленĕ. Хулара апат-çимĕç пĕтсе ларнă. Апат-çимĕç илсе пыракан пачах та çук.

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германирен çитнĕ хыпарсем тăрăх, пысăк вырăнсем йышăнса тăракан нимĕçсем Швейцари чикки урлă каçса тарасси ÿссех пырать. Хыпарсем тăрăх, февралĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче гестаповецсем Швейцарие тарма хăтланнă çавăн пек нимĕçсене сахалтан та 60 çынна тытса хупнă. Вĕсен шутĕнче гитлеровецсен «Уфа» ятлă кинофирмин директорĕ пулнăскер, юлашки вăхăтчепех Германири кино промышленноçне ертсе пынă Гугенберг доктор тата Сименс фирмин руководителĕсенчен пĕри—Эбергардт пур.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕн ĕнерхи ларăвĕнче кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтăва—мир тăвас ĕçе профсоюзсем хутшăнасси çинчен сÿтсе-явнă. Ку ыйтупа Британи тред-юнионĕсен конгресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин доклад туса панă. Германин пуласлăхĕ çине епле пăхмалли пирки тăракан ыйту çине куçса, Германие пĕр сăмахсăр парăнтарасси вăл Германин кĕрешÿ хăватне пĕтерсе хуни çеç мар пулать, тенĕ Ситрин; унтан вара çапла хушса хунă: «Германие союзниксем вăрçă енчен контроль туса тăрĕç кăна мар, политика тĕлĕшĕнчен те тытса йĕркелесе тăрĕç, тенĕ. Чылай вăхăт хушши Германире чăн-чăн правительство вырăнĕнче союзниксен оккупациллĕ влаçĕсем пулĕç. Çавăнпа та Германие оккупациленĕ çарпа граждăнла администраци ĕçне профсоюзсем канашлакан сасăпа та пулин хутшăнмалла пек туйăнать, мĕншĕн тесен оккупаци вăхăтĕнче мирĕн кĕске вăхăтлăха тунă программине пурнăçа кĕртмелле пулать».

Германирен Тури Силезие, Саар облаçне тата промышленноçлă ытти районсене тытса илсе, Германие ялхуçалăхлă государство туса хума сĕннисене хирĕç каланă Ситрин.

Ситрин доклачĕ тăрăх пуçланнă прение совет делегачĕ Ю. А. Беляева пуçарса янă. Беляева хыççăн пĕтĕм Индири профсоюзсен конгресĕн представителĕ Данге сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл: Германи пирки Ситрин тĕрĕс каларĕ, анчах профсоюзсен шалти задачисем çинчен питĕ сахал чарăнса тăчĕ, тенĕ. Мир тăвас ыйту чикĕсем тăвас, репарацисем илес тата çавăн йышши ытти ыйтусемпе çеç татăлмасть. Вăл ыйтусен шутне çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери демократи тата социальнăй прогресс ыйтăвĕсем те кĕреççĕ.

Çакăн хыççăн совет делегацийĕн членĕ М. П. Тарасов юлташ сăмах тухса каланă. «Ситрин докладĕнче,—тенĕ вăл,—пулас мирлĕ килĕшÿ çине профсоюзсем епле пăхмалли çинчен, пирĕн конференци сÿтсе-явса йышăнмалли задачăсем çинчен тĕплĕн те лайăх каласа панă. Çак трибуна çинчен эпĕ çак ыйтупа совет делегацийĕн сĕнĕвĕсем çинчен каласа парасшăн. Пĕрлешÿллĕ нацисен рабочи класĕ, вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхне хăйĕн çинче тÿссе иртерĕскер, Германие аркатса тăкнипе тата хальхи вăрçа пĕтернипех лăпланса ларма пултараймасть. Рабочи класс фашизмăн пур палăрăмĕсене те тĕппипех пĕтерсе тăкса, çирĕп тата вăрăха пыракан мир, пĕтĕмĕшле хăрушсăрлăх туса хурасшăн. Çакă çеç этемлĕхе пулас агрессирен сыхлама пултарать, ирĕклĕхе юратакан тĕнчери халăхсене анлăн пĕрлешсе туслăн ĕçлеме тата çĕç халăхĕн материальнăй, культурăпа йăла ыйтăвĕсене пĕтĕмпех татса пама пултарать.

Мирлĕ пурнăçа мĕн хăратса тăнине шута илнĕ чухне тĕнчери пĕррĕмĕш вăрçă хыççăн мĕн-мĕн пулса иртнине шута илсе тăрас пулать. Ырă тăвас тенипе тата ÿкĕтленипе агрессие пĕтерсе лартма та, пусарса хума та, вăл сиксе тухассине чарса лартма та çук, çакна пирĕн манма юрамасть. Кирек епле «ÿкĕтлесе килĕштерес политика» çине те мире хирĕçле акт çине пăхнă пек пăхас пулать. Çавăн пек политика вăл мире юратакан халăхсене сиен кÿме кăна пултарать, вĕсен сисĕмлĕхне пусарма пултарать. Хальхи вăрçă пуçланас умĕнхи çулсенче çапла пулчĕ те ĕнтĕ».

Совет делегацийĕ хушнипе Тарасов юлташ профсоюзсем мир тăвасси çине епле пăхни çинчен калакан сĕнÿ панă.

Тарасов юлташ сăмахĕ хыççăн организациллĕ комитетăн представителĕ Торнтон çав комитетăн заявленине вуласа панă: «Организациллĕ комитет,—тенĕ заявленире,—çак конференцие Польша представителĕсене чĕнесси çинчен тепĕр хут сÿтсе-яврĕ. Организациллĕ комитет шучĕпе, çак ыйтăва пурте килĕшмелле татса пама май çук, ăна конференци пĕтĕмĕшпе килĕшсе йышăнмалла». Çакăн пек ĕç, тенĕ заявленире, чи пысăк делегацисенчен пĕри конференцие чĕннĕ организацисен спискине ÿстерме килĕшмен пирки пулса тухрĕ, тенĕ. «Асăннă делегаци позицийĕ пирки хăйĕн шухăшне каламасăрах тата Польша делегачĕсене чĕнес пирки те хăйĕн шухăшне каламасăрах», организациллĕ комитет «конференци ку таранччен йышăннисемсĕр пуçне çĕнĕ делегатсем чĕнесси пирки урăх нимĕн те тумалла мар», тесе сĕннĕ.

Çак сĕнĕве пур делегацисем те йышăннă.

РУМЫНИРЕ «СКЫНТЕЙЯ» ХАÇАТĂН РЕДАКТОРНЕ ВĔЛЕРМЕ ТĂНĂ

БУХАРЕСТ, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, демократиллĕ «Скынтейя» хаçатăн редакторне Мирон Константинескуна вĕлерме тапăннă.

Константинеску фашистла Антонеску режимĕ вăхăтĕнче 4 çул хушши тĕрмере ларни çинчен аса илтерсе, «Трибуна попорулуй» хаçат çапла çырать: «Ăна чăн-чăн демократи представителĕ вырăнне хурса, перемири килĕшĕвне саботаж тумашăн пенĕ».

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци правительствипе ЭАМ делегачĕсем пур ыйтусем тĕлĕшпе те пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнă. Греци правительствин Афины хулине таврăннă делегачĕсем паян премьер-министрпа Пластираспа тата правительствăн ытти членĕсемпе те тĕл пулаççĕ. Конференци паян каçхине каллех пуçланмалла. Çав конференцире каçхине тунă килĕшĕве икĕ делегацийĕ те алă пусасса кĕтеççĕ.

ГОЛЛАНДИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Голланди правительстви Гербранди премьер-министра Вильгельмина королевăна вырăнтан тухасси çинчен заявлени пама хушнă. Королева çав заявление пăхса тухма илнĕ те Гербрандие правительствăна Голландин ирĕке кăларнă районĕсенчен çынсем кĕртсе улăштарма сĕннĕ.

ПЬЕРЛО ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Брюссельти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бельги премьер-министрĕ паян депутатсен палатинче çапла каланă: эпĕ принц-регент патне правительство вырăнтан тухасси çинчен калама каяссшăн, тенĕ. Правительствăна палата урăх шанмасть, тенĕ вăл.

ПАРИЖ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Брюссельтен çапла пĕлтерет: çĕнĕ правительство тума социалистсен партийĕн членне Ван Акера хушнă. Ван Акер вырăнтан тухнă Пьерло правительствинче ĕçпе социальнăй обеспечени министрĕ пулса ĕçленĕ. Спаак ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнĕнчех юлать.

УМАНСКИЙ ЮЛТАШ ÿЧĔН КĔЛНЕ СОВЕТ СОЮЗНЕ АСАТНИ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Мексико хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕн Мексикăри посолĕ пулнă Уманский юлташăн тата Совет посольствин ытти сотрудникĕсен, самолет çĕмĕрĕлнĕ пирки вилнĕскерсен, кĕлне февралĕн 9-мĕшĕнче çар самолечĕпе Сан-Франциско хулине илсе кайнă. Унтан вĕсене СССР-а ăсатмалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сельхозпромснабăн Чăваш республикинчи конторине ялан ĕçлеме шорниксем тата вĕренекенсем кирлĕ. Ĕç укçине ĕç тăрăх тÿлеççĕ. Столовăй пур.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 34. Тел. 0—94.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—[illegible].

НТ 00522. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000